*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

80 (2492) [1]
Хакӗ ирӗклӗ
Эрнере икӗ хут тухать

2014,
юпа, 15

1991 çулхи ака уйӑхӗн 21-мӗшӗнче тухма тытӑннӑ




Сӑн ӳкерчӗкне www.cap.ru сайтран илнӗ



## Уява – пысӑк кӑтартусемпе

Иртнӗ вырсарни кун çӗр-шывра Ял хуçалӑхӗпе тирпейлекен промышленноç ӗçченӗсен кунне уявларӗç. Çывӑх вӑхӑтра ӑна республикӑра та анлӑн паллӑ тӑвӗç.

Çӗр ӗç отраслӗнчи патшалӑх политики хуçалӑхсен мӗн пур формине пулӑшассине, ӗç тухӑçлӑхне ӳстерессине, ял хуçалӑх продукцине тарӑннӑн тирпейлес ӗçе аталантарассине тӗпе хурать. Ял хуçалӑх таварӗ туса кӑларакансене патшалӑх енчен пулӑшасси çулран çул лайӑхланса пырать. Çакӑ Чӑваш Енре те агропромышленноç комплексӗн кӑтартӑвӗсене палӑрмаллах лайӑхлатма пулӑшрӗ. Мӗнле кӑтартусемпе кӗтсе илме хатӗрленеççӗ-ха ӑна ӗçченсем?

Кӑçал республикӑра ял хуçалӑх культурисене 9,3 пин гектар ытларах акса хӑварса лаптӑка 558,6 пин гектара çитернӗ. Çак вӑхӑт тӗлне пӗрчӗллӗ тата пӑрçа йышши культурӑсене йӑлтах кӗлете кӗртнӗ. Пурӗ 568,8 пин тонна пуçтарса илнӗ. Кӑтарту иртнӗ çулхипе танлаштарсан 160 пин тонна ытларах. Кӗр уяр та типӗ килни çӗр улмине вӑхӑтра кӑларса пуçтарма май панӑ. Пӗлтӗрхипе танлаштарсан унӑн кӑтартӑвӗ пысӑкрах. Ял хуçалӑх организацийӗсемпе пысӑк фермер хуçалӑхӗсенче «иккӗмӗш çӑкӑр» 143,4 пин тонна тухнӑ. Гектарти вӑтам тухӑç 163,7 центнерпа танлашнӑ.

Республикӑра «2012-2014 çулсенче фермер ӗçне пуçӑнакансене пулӑшасси» тата «Хресчен (фермер) никӗсӗ çинче çемье фермине аталантарасси» программӑсемпе усӑ курса фермер ӗçне пуçӑннӑ 151 çын тата çемье фермине аталантаракан 16 çемье патшалӑх пулӑшӑвне тивӗçнӗ. «Агропромышленноç комплексне аталантарасси» наци проекчӗпе вырӑх-чӗрлӗх отраслне çӗклеме 178 инвестици проекчӗ хута кайнӑ, черетре – 24. Пысӑк та пӗлтерӗшлӗ проектсенчен пӗри – «Агрохолдинг «Юрма» пӗрлешӳ. Чӑх-чӗп витисене хута яни республикӑра пурӑнакансене вырӑнти çимӗçпех тивӗçтерме май парӗ. Апатçимӗçе ют çӗр-шывран кӳрсе килме чарни çӗр ӗçченӗсене тавар вырнаçтармалли çӗнӗ рынокесне çул хывма, продукци илессине ӳстерме хистет. Экологи енчен таса çимӗç унта та хӑйӗн вырӑнне тупасса шанас килет.

# Хакӗ те, сумӗ те çӳллӗ шайра

**Юпа уйӑхӗн 9-11-мӗшӗсенче Шупашкарта Пӗтӗм тӗнчери «Раççей – спорт çӗр-шывӗ» форум иртрӗ. Унта хӑнасем 20 çӗр-шывран тата Раççейри 81 субъектран пухӑнчӗç. Мероприятие пӗтӗмӗшле 2767 çын хутшӑнни паллӑ. Спорт уявне Раççей Президенчӗ Владимир Путин та килчӗ. Çавӑн пекех форумра Пӗтӗм тӗнчери Олимп комитечӗн членӗсем, паллӑ спортсменсем (Олимп чемпионӗсем 50 яхӑн), политика деятелӗсемпе спорт ӗçченӗсем пулчӗç.**

Форум вӑхӑтӗнче ӗçлӗ 18 мероприяти ирттернӗ, 8 ӑсталӑх класӗ – çӑмӑл атлетика, хӗрарӑмсем хушшинче ирӗклӗ майпа кӗрӗшес тӗлӗшпе, спорт гимнастики, сӗтелçи теннисӗ, триатлон, самбо тата пӑр катокӗнче конькипе эрешлесе ярӑнас тӗлӗшпе. Ӑсталӑх класӗсене çӗр-шыври 19 регионтан 400 специалист (вӗсенчен 170-ӗшӗ – Чӑваш Енрен) хутшӑннӑ. Икӗ кунхи заняти кӑтартӑвӗ тӑрӑх унта хутшӑннисене пурне те квалификацие ӳстерни çинчен калакан сертификат панӑ.

Форум ӗçленӗ вӑхӑтра Пӗтӗм тӗнчери «Хальхи спорт. Çӗнӗлӗхсемпе пуласлӑх» тата «Спорт литератури, пресси, мультимедиа» куравсем ӗçлерӗç. Унта тӗнчери паллӑ издательствӑсен продукцийӗсем, интернет ресурссем, мультимедиа хатӗрӗсем пулчӗç. Вӗсене 25 пине яхӑн çын пырса курчӗ. Курав площадкисенче «Ӗçпе хӳтӗлеве хатӗр» (ГТО) федераци порталӗн презентацийӗ иртрӗ.

Спортсменсен çитӗнӗвӗсемпе тупӑшӑвӗсене сӑнлакан ӳкерчӗксемпе «Спорт – пирӗн республика кун-çулӗнче» фотокурав паллаштарчӗ.

Шупашкарта йӗркеленӗ зарядкӑна «Россия-2» телеканалӑн спорт комментаторӗ Дмитрий Губерниев ирттерчӗ. Унта 5 пин çын хутшӑннӑ. Пӗтӗм тӗнчери утакансен кунне вара – 30 пине яхӑн.

Форумӑн пӗрремӗш кунне тӗп хулари Карл Маркс урамӗнче, «Спорт бульварӗнче», спортӑн 30 лапамӗ ӗçлерӗ. Кунта Шупашкарти спорт федерацийӗсемпе спорт шкулӗсем тӗп хулара пурӑнакансемпе хӑнасене хӑйсен çитӗнӗвӗсемпе, спортӑн тӗрлӗ тӗсӗпе паллаштарчӗç.

Форум ӗçне çутатма Чӑваш Ене федерацин тата регионсен 100 журналисчӗ килнӗ. Вӗсемсӗр пуçне Чӑваш Енри массӑллӑ информаци хатӗрӗсен 100 ӗçченне аккредитациленӗ. Раççей Президенчӗ çумӗнчи Физкультурӑпа спорта аталантарас енӗпе ӗçлекен канашлу çинчен сӑнланӑ тӳрӗ эфира ПТРКан 60 çынни хатӗрленӗ.

2-мӗш стр. ➔



# Хакĕ те, сумĕ те çӳллĕ шайра

1-мĕш стр.

Канашлăва РФ Президенчĕ Владимир Путин ертсе пынă. Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич, канаш членĕсем (пурĕ 32 çын) тата ытти хăна хутшăннă. Ларура 2016-2020 çулсенче спортăн пурлăхпа техника базине аталантарас тата физкультурăпа спорт мероприятийĕсен тытăмне лайăхлатас ыйтусене сӳтсе явнă.

Владимир Путин Чăваш Енре демографи лару-тăрăвне лайăхлатмалли мерăсене тивĕçлипе хакланă. Çавăн пекех вăл Чăваш Ен Пуçлăхне физкультурăпа спорта аталантарас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата республикăра пурнăç пахалăхне ӳстерме тăрăшнăшăн тав тунă. **«Республикăра (Чăваш Енре) 20 çул демографи лару-тăрăвĕ пĕчĕк шайра пулнă. 20 çул! Юлашки виçĕ çулта вăл хăпарнă. Çитменнине çирĕппĕн, тĕреклĕн. Паллах, çакă эпир йышăннă мерăсен пĕтĕмĕшле кăтартăвĕ. Ку вăл – медицина, çĕнĕ перинаталь центрĕсем туни, ку вăл – амăшĕн капиталĕ шучĕпе тивĕçекен укçа-тенкĕ пулăшăвĕ, ку вăл – демографи лару-тăрăвĕпе йывăрлăх тӳснĕ регионсене юлашки икĕ çулта пулăшу кӳни, виççĕмĕш ача çуралнă çемьесене хавхалантарни. Анчах çакă физкультурăпа спорта тимлĕх уйăрманнине пĕлтермест.**

**Эпĕ сире çак ĕçре чылай çул тăрăшнăшăн тав тăвасшăн. Спорт представителĕсем пурнăç тăршшĕпех ку ĕçре вăй хураççĕ, нумай ырă тĕслĕх кăтартаççĕ. Сирĕн вĕренекенсен кăтартăвĕсем питĕ лайăх – уйрăм çынсен те, командăсен те. Вĕсем, паллах, çамрăксене, çав шутрах пур ӳсĕмрисене те, спорта юратма хавхалантараççĕ, кăмăл-туйăма хускатаççĕ.**

**Паянхи тишкерĕвĕн кăтартăвĕсем çитес пилĕк çуллăхри спорт аталанăвĕн программин никĕсĕ пулнине шута илсе паянхи ĕçшĕн тав тăватăп сире»,** – тенĕ Владимир Путин.

Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче форум хăйĕн ĕçне Шупашкарти Самбо керменĕнче пĕтĕмлетнĕ. Раççей спорт министрĕ Виталий Мутко мероприяти тухăçлă иртнине пĕлтернĕ. Çавăн пекех вăл çĕр-шыври спорт аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсене те хускатнă.

ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ларура сăмах илнĕ май Чăваш Енри тăнăçлăха упрасси хăйĕн тĕп тивĕçĕ пулнине палăртнă. Ку енĕпе физкультурăпа спорт пулăшнине пĕлтернĕ. Пĕтĕм тĕнчери спорт организацийĕсен ертӳçисем вара форум ĕçне пысăка хурса хакланă.

Ларура Виталий Мутко Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева тата спорт министрне Сергей Мельникова «2013 çулта Хусан хулинче иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери çуллахи XXVII универсиада» асăну медальне панă. «Физкультурăпа спорт отличникĕ» паллăна вара ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, Чăваш Енĕн волейбол федерацийĕн вице-президенчĕ Юрий Кислов тивĕçнĕ. Çавăн пекех Пĕтĕм Раççейри РФ субъекчĕсенчи физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелессин смотр-конкурсĕнче палăрнăшăн Чăваш Республики ятарлă Кубока тата Раççей Спорт министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ.

Малашне Чăваш Ен çĕнĕ ăмăртусене хатĕрленме тытăнĕ: 2015 çулта Шупашкарта çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионачĕ иртет. 2016 тата 2018 çулсенче вара – хăвăрт утакансен тĕнче чемпионачĕсем. Чăваш Ен тата Шупашкар çĕнĕ çĕнтерĕве хатĕрленет. Сăмах май, Шупашкар Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕршывĕ» форума иртternĕ пиллĕкмĕш хула. Малarах вăл Хусанта (2009 çулта), Мускавра (2010 çулта), Саранскра (2011 çулта) тата Якутскра (2012 çулта) пулнă.

**Валентина ПЕТРОВА.**






Елчĕк районĕнчи Патреккел шкулĕн сайтĕнчен

**Михаил СКВОРЦОВ, Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпари тулли мар вăтам шкулти физкультура учителĕ, Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:**

– Форума Чăваш Енре иртterни республикăшăн пысăк чыс шутланать. Ара, тĕнче шайĕпе иртрĕ-çке вăл. Чăн та, юлашки вăхăтра Чăваш Енре чылай спорт объекчĕ хута кайрĕ. Пирĕн спортсменсен çитĕнĕвĕсем те куç умĕнчех. Халĕ спортпа туслашма ялта та услови лайăх. Сăмахран, кăçал пирĕн шкулта спортзала юсаса çĕнетрĕç. Унта хулари пек душ пӳлĕмĕсем те пур.

Районти, республикăри ăмăртусене хутшăнма тăрăшатпăр. Шкулта спортăн пур тĕсĕ те аталанать. Ачасем çеç мар, вĕрентекенсем те маттур пирĕн. «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума халалласа районти учительсен хушшинче ăмăрту иртрĕ. Пирĕн ушкăн пур енĕпе те ӳсĕмсем кăтартрĕ. Пĕрремĕш вырăна тухрăмăр.

**Николай ПЕРЕПЕЛКИН, Патăрьел районĕнчи Туçа ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форум Шупашкарта иртни питĕ пĕлтерĕшлĕ. Тĕнчипех килсе курчĕç хуламăра. Эпĕ илтнĕ тăрăх – хăнасем лайăх кăмăл-туйăмпа кайнă. Шурă Шупашкар пурне те тыткăнланă.

Спорт халĕ ялсенче те аталанать. Ăмăртусене ватти-вĕтти хутшăнать. Хамăр ял тăрăхĕнче армрестлинг тата шашкăлла выляс енĕпе ăмăртусем ирттеретпĕр. Çулсеренех Анат Туçари шкулта Совет Союзĕн Геройĕ Павел Кузнецов ячĕпе спартакиада иртет. Волейболла вылясси те йăлана кĕчĕ. Вĕренекенсемпе ял халăхĕн ушкăнĕсем пур, пĕр-пĕринпе тупăшаççĕ вĕсем. Ял тăрăхĕнче виçĕ спортзал. Кунта ачасем çеç мар, аслисем те çӳреççĕ.

**Владимир ВАНЕРКЕ, Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕ:**

– Питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ спорт уявĕ пулчĕ. Нумай хăна килчĕ. Ытти район администраци пуçлăхĕсемпе пĕрле эпĕ те çитсе куртăм унта. Çĕнĕ Шупашкарта пултăмăр. РФ Президенчĕ Владимир Путин калаçăвне тимлесе итлерĕмĕр. Вăл спортри ăсталăха ӳстересси, регионсенче физкультурăпа спортра массăллăха аталантарасси çинчен каларĕ.

Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче районта Ял хуçалăх тата тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен кунне ирттертĕмĕр. Уява эпир те зарядкăран пуçларăмăр. Хальхи вăхăтра Чăваш Енри район администрацийĕсем хушшинче спартакиада пырать. Эпир, Тăвайсем, хальлĕхе – иккĕмĕш вырăнта.

**Юрий БРОНЮКОВ, кире пуканĕ йăтас тĕлĕшпе спорт мастерĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕн директор çумĕ:**

– «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума мана та хутшăнма тӳр килчĕ. Пире, спорт ветеранĕсене уява ятарласа чĕнсе илчĕç. Тĕлĕнсе те савăнса сăнаса лартăмăр трибуна çинчен. Ыттисемпе пĕрлех зарядка та турăм.

Уява хатĕрленсе районта сахал мар мероприяти иртрĕ. Вĕсене ял çамрăкĕсене, аслă çултисене ытларах явăçтарма тăрăшрăмăр: чупас, кире пуканĕ йăтас, футболла выляс тата ытти енĕпе ăмăртусем йĕркелерĕмĕр. Районта Сывлăх кунĕнче Хĕрлĕ Чутайри стадионра ватти-вĕтти зарядка тăвать.

Чăваш Енре тĕнче шайĕнчи форум ирттерни пысăк чыс. Ку республикăра массăллă спорта аталантарма пулăшĕ. Çамрăксене халĕ интернет, телевизор умĕнчен уйăрма йывăр. Районта чаплă спорт кермене çĕклерĕç пулсан та вăл пушă ларни пулкалать. ГТО нормативĕсене кĕртни яш-кĕрĕме те вырăнтан хускатасса шанас килет. Мĕншĕн тесен вĕсене малашне шкултах пурнăçламалла. Апла ирĕксĕрех спортпа туслашмалла. Çĕр-шыва çирĕп сывлăхлă çынсем кирлĕ. Спортпа туслă çын эрех-сăрапа, наркотикпа айкăшмасть, хăйне йĕркеллĕ тытать.

**Анатолий КУЗЬМИН, Муркаш районĕнчи Йӳçкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:**

– Форум – Чăваш Еншĕн кирлĕ те сумлă мероприяти. Çĕр-шыв ертӳçисем хутшăнниех унăн пĕлтерĕшне палăртать. Çакă вырăнти экономикăшăн та аван, инвесторсене явăçтарма пулăшĕ. Форум – спорта аталантарассипе тунă сумлă утăм. 2015 çулта Чăваш Енре çăмăл атлетика енĕпе Европа чемпионатне ирттерме йышăнниех мĕне тăрать! Апла пире шанаççĕ, çитĕнӳсем кĕтеççĕ. Малашне олимпиадăсене, тĕнче чемпионачĕсене республикăран хутшăнакансен йышĕ те ӳсĕ. Йӳçкасси ял тăрăхĕнче те спорт вăй илсе пырать. Шкул стадионĕнче куллен мероприятисем ирттеретпĕр. Ку енĕпе Григорий Григорьев ĕçлесе пырать. Çамрăккине, ватти-вĕттине – пурне те явăçтарма тăрăшать вăл. Ушкăнпа зарядка тăвасси те йăлана кĕнĕ ĕнтĕ.

**Алексей СЕРГЕЕВ, спорт мастерĕн кандидачĕ, «Хĕлхем» ача-пăча спорт шкулĕн тренерĕ:**

– Шел, Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ спорт уявне хутшăнаймарăм. Çапах форум ĕçĕ-хĕлĕпе массăллă информаци хатĕрĕсем урлă тĕплĕн паллашма тăрăшрăм. Курни-илтнине йышпа пĕрле сӳтсе яврăмăр, ĕçе-хĕле çĕнĕлле йĕркелес, халăха спорта ытларах явăçтарас тĕлĕшпе план йышăнтăмăр. «Хĕлхем» спорт шкулне йышлăн çӳреççĕ. Сăмах май, манăн вĕренекенĕм Люда Шоркина иртнĕ çул армрестлингпа ăмăртса Европа чемпионĕ ята илчĕ. Ку пирĕншĕн пысăк çитĕнӳ. Ăна кура ыттисем те туртăнаççĕ.

### Ял халӑхӗн савӑнӑҫӗ

Елчӗк районӗнчи Элпусӗнче фельдшерпа акушер пункчӗ уҫӑлнӑ. Ӑна тума республика бюджечӗнчен 2812,4 пин тенкӗ тӑкакланӑ.

Малашне кунта икӗ ял халӑхӗ ҫӳрӗ. Медицина ӗҫченӗсем 345 ҫын сывлӑхне пӑхса тӑрӗҫ.

Асӑннӑ районта ултӑ ФАП тума палӑртнӑ. Пӗлтӗр пӗри хута кайнӑ. Виҫҫӗмӗшне ҫитес вӑхӑтрах Кӗҫӗн Таяпа ялӗнче уҫӗҫ. Сӑмах май, республикӑра 100 фельдшерпа акушер пункчӗ пулӗ.

### Сыватмӑшсене – ҫӗнӗ автомашинӑсем

Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев ҫӗнӗ «Васкавлӑ пулӑшу» машинисен уҫҫине савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура панӑ. 15 автомашина малашне Ҫӗрпӳ, Красноармейск, Канаш тата Тӑвай районӗсенчи тата Канаш хулинчи сыватмӑшсенче ӗҫлӗҫ. Сӑмах май, маларах ака уйӑхӗнче республикӑна 39 автомашина килнӗччӗ. Вӗсем – Шупашкарпа Ҫӗнӗ Шупашкарти сыватмӑшсенче.

Машинӑсем ӑшӑ, меллӗ. Вӗсене кондиционерсемпе тата сигнал тытӑмӗпе пуянлатнӑ.




**ВИҪҪӖ ВИҪ ТЕ ПӖРРЕ КАС**

# Кӗлечӗ тулли, кӗсйи – пушӑ

**Хӗрлӗ Чутай районӗнче ура ҫинче ҫирӗп тӑракан хуҫалӑхсем шутлӑ кӑна. Ку шута «Свобода» колхоз та кӗрет. Икӗ ялтан – Акташпа Анат Ҫӗрпӳкассинчен – йӗркеленнӗ вӑл. Пӗчӗк хуҫалӑх йывӑрлӑха пӑхмасӑр малаллах талпӑнать, умри ҫула такӑрлатать. Предприятие ҫирӗм ҫула яхӑн Валериан Федотович Бромбин ертсе пырать.**

**– Валериан Федотович, кӗр пуянлӑхӗ хуҫалӑх пӳлминче те сисӗнчӗ-тӗр. Кӗлетсем «сарӑ ылтӑнпа» тулчӗҫ-и?**

– Пирӗн тӑрӑхра ҫу типӗ килнипе акнилартни типсе сарӑхмах тытӑннӑччӗ. Юрать, ҫумӑр чашлаттарсах ҫуса иртрӗ. Калча тепӗр хут вӑй илсе кайрӗ. Ҫанталӑка кура эпир тӗш тырӑ гектартан 22-24 центнер тухасса кӑна шаннӑччӗ, кӑтарту 30 центнера ҫитсен савӑнтӑмӑр. Пӗр пин тонна пуҫтарса кӗртрӗмӗр. Тулли кӗлет те тупӑш параймарӗ – «сарӑ ылтӑн» хакӗ ытла пӗчӗк. Ӑна хамӑр ҫынсенех сутрӑмӑр, пай ҫӗрӗсемшӗн патӑмӑр. Хаклӑпа мар, килограмне 5-6 тенкӗпе ҫеҫ. Пай ҫӗрӗшӗн хӑшӗсене пӗр тонна ытла тырӑ тивет. Выльӑха хӗл каҫарма ҫителӗклех.

**– Хальхи вӑхӑтра хуҫалӑх тӗш тырӑпа кӑна ӗҫлет. Унччен кунта хӑмлапа ҫӗр улмирен те самай тупӑш илнӗ. Мӗншӗн уйсем сасартӑк чухӑнланса юлнӑ-ши?**

– Виҫӗ ҫул каялла эпир «симӗс ылтӑн» та, «иккӗмӗш ҫӑкӑр» та ҫитӗнтернӗ. Вӗсене туса илме хӑватлӑ техника туяннӑччӗ. Темле чаплӑ техника та ҫынсӑр ӗҫлеймест. Хӑмлапа ҫӗр улми пӗр вӑхӑтра пулса ҫитеҫҫӗ. Пӗчӗк коллективпа харӑсах темиҫе ӗҫе ӗлкӗрме йывӑр. Хӑмлана ҫийӗнчех татмасан пучахӗ вӗҫет. Ҫӗр улмине вӑхӑтра кӑлармасан юр айне юлать. Хӑмла татма хӑтланса «иккӗмӗш ҫӑкӑра» икӗ ҫул шӑнтса ятӑмӑр. Халӑхпа пухура сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн малашне «симӗс ылтӑнпа» кӑна ӗҫлеме шутларӑмӑр. Унӑн лаптӑкне 8 гектара ҫитертӗмӗр. Продукцие вырнаҫтарассипе йывӑрлӑх пулман, укҫине те аванах тӳленӗ. Ҫӗр улми комбайне, ытти техникӑна управа лартрӑмӑр. Усӑ курмансker пӑхса тӑрсан та юхӑнать. Шел, халӗ унӑн кӑшкарӗ кӑна юлнӑ темелле.

Ик мулкача хӑвалакан пӗрне те тытайман тенӗн хӑмларан пысӑк тупӑш илесси пӑчланчӗ. Тавар кайма пӑрахрӗ, тӑкаксене саплаштараймн пултӑмӑр. Виҫҫӗмӗш ҫул хӑмла пахчисем пушӑ лараҫҫӗ. Йывӑҫ юпасем ҫӗрӗшсе пӗтрӗҫ ӗнтӗ. Тимӗрпе бетонран тунисем лайӑх-ха. Хӑмла туса илмелли, татмалли, типӗтмелли хаклӑ техника каллех управра. Юхӑнса пӗтесрен пӑхсах тӑратпӑр, анчах сыхласа ҫитерейӗпӗр-ши? Пурлӑха куҫ хывакансем те тупӑнсах тӑраҫҫӗ.

Пуҫтарма ҫултальӑк аркатма ҫур кун та ҫителӗклӗ. Пахчасене тепӗр хут чӗртсе тӑратма пулать, анчах унран пысӑк тупӑш илесси иккӗлентерет. Ӗҫе тепӗр хут пуҫарса яма укҫа самай хывмалла. Етӗрне районӗнчи хӑмла туса илекен хуҫалӑхсем те лаптӑксене чакарсах пыраҫҫӗ – тавара вырнаҫтарма йывӑр, ӗҫлекенсем ҫителӗксӗр. Тӗрӗссипе республикипех ҫакӑн пек лару-тӑру. Чӑваш хӑмлин чапӗ сӳнни кулянтарать паллах. Пирӗн тавара хаклама, туянма пӑрахрӗҫ пулсан мӗншӗн тертленмелле?

**– Апла тупӑш ҫӑл куҫӗ мӗнре-ши?**

– Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетнипе аталанса пыратпӑр. Уйра туса илнине ӑна тӑрантарма яратпӑр. Пирӗн майракаллӑ шултра выльӑх 350, ҫав шутра ӗнесем 100 ӗне. Сӗте Элӗке ӑсататпӑр. Литрӗ – 16 тенкӗ. Ӗне какай хакӗ иртнӗ ҫултанпа улшӑнманпа пӗрех, килограмӗ (чӗрӗ виҫе) 60 тенке каять. Вӑкӑрӑн кӑштах хӑпарчӗ темелле, 80 тенкӗпе туянаҫҫӗ.

Паллах, услам ытларах сӗт сутнипе кӗрет. Иртнӗ ҫул тата 100 ӗне вырнаҫмалӑх ферма тӑвасшӑнччӗ. Проектне те хатӗрлерӗмӗр. Кредит илме документсене банка тӑратрӑмӑр. Пире 14-15 млн тенкӗ кирлӗччӗ. Шел, хуҫалӑхӑн салук ҫитеймест тесе кредит памарӗҫ. Ҫӗнӗ техникӑсемшӗн те субсиди илсе пӗтерейменрӗмӗр. Тӑкаксен пайне саплаштарма килӗшмерӗҫ. Халӗ ҫӗршывра выльӑх-чӗрлӗх аталантарассипе ӗҫлемелле терӗҫ. Ҫав хушӑрах ӗне вити тума кредит уйӑрманни тӗлӗнтерет. Хуҫалӑх тупӑшлӑ ӗҫлесе, парӑмсемпе вӑхӑтра татӑлса пырать темелле. Пирӗн те аталанас, фермӑсене ҫӗнетес килет. Хамӑр ҫеҫ вӑй ҫитерейменӗпӗр. Пӗчӗк хуҫалӑхсене шанманни, пулӑшма тӑрӑшманни кӳрентерет.

**– Валериан Федотович, хальхи тапхӑрта хуҫалӑхсенче ӗҫлекенсем сахалланса пыраҫҫӗ. Ҫамрӑксене ӗҫе явӑҫтарма йывӑр. Сирӗн тӑрӑхра ку енӗпе лару-тӑру мӗнлерех? Ҫӗр ӗҫӗ йывӑр, пархатарсӑр тесе пӑрӑнакансем пур-и?**



– Ӗҫе вырнаҫасчӗ тесе черете тӑракан ҫук. Фермӑра акӑ Раиса Филиппова заведующипе Елена Максимова, Валентина Филиппова, Надежда Иванова дояркӑсем нумай ҫул ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗнӗ ферма хута янӑ пулсан тен, ҫамрӑксене те явӑҫтарма пулатчӗ-и? Пур-ха вӗсем, ҫамрӑксем. Александр Токарев, Федор Петров механизаторсем вӑтӑра та ҫитмен. Иртнӗ ҫул Таисия Иванова бухгалтер дипломӗпе таврӑнчӗ. Аслӑ шкула хӗрлӗ дипломпа пӗтернӗскере тӗп бухгалтер ӗҫне шанса патӑмӑр. Алена Токарева кассир та ҫамрӑк-ха. Сӑмах май, Аленӑпа Александр пӗр тӑвансем. Амӑшӗ, Зоя Виссарионовна, хуҫалӑхрах пӑрусем пӑхать. Чӑннипех маттур ҫемье.

Ҫапах яш-кӗрӗме хуҫалӑх ӗҫне явӑҫтарма ҫӑмӑл мар. Вӗсен те иттисем хыҫҫӑн пысӑк шалуллӑ ӗҫ шыраса аякка тухса каяс килет. Пӗррехинче Элӗк районӗнчен пӗр ҫемье тырӑ туянма килчӗ. Ашшӗ-амӑшӗпе пӗрлех аслӑ пӗлӳ илнӗ хӗрӗ те ҫула тухнӑ. Вӗсемпе калаҫнӑ май хуҫалӑхпа паллаштаратӑп. «Акӑ сана хуҫалӑх, ӗҫсӗр лариччен кил те вырнаҫ. Ҫӳреме те ҫывӑх», – терӗ амӑшӗ хӗрне. «Шалу мӗн чухлӗ тӳлетӗр?» – тӳрех ыйтрӗ лешӗ. «10-15 пин тенкӗ. Кайран ӗҫленине кура хушатпӑр», – ӑнлантаратӑп ӑна. «Ай-уй, ытла та пӗчӗк. Эпӗ Комсомольски районӗнчи пӗр хуҫалӑхра практикӑра пултӑм. Унта килнӗ-килмен уйӑхне 20-25 пин тенкӗ параҫҫӗ, кайран, ӗҫлесе кайсан 40-50 пин тенкӗ тӳлеме шантараҫҫӗ», – хирӗҫлерӗ вӑл. Эпир ун чухлӗ парайманнине пӗлсен тек калаҫмарӗ.

Яш-кӗрӗмшӗн хуҫалӑхра ӗҫлени сумлӑ мар халӗ. Пысӑк укҫа шыраса Мускав, Ҫурҫӗр тӑрӑхнех тухса кайма хатӗр. Йӗркеллӗ ӗҫлесен ялтах лайӑх укҫа ӗҫлесе илме пулать. Колхозра выльӑх апачӗ хатӗрленӗ, тырӑ вырнӑ вӑхӑтра 30-40 пин тенкӗ ӳкет. Ҫамрӑксене яла хӑварас тесе вӗсемпе, ашшӗ-амӑшӗпе тӗл пулса калаҫатпӑр, ӳкӗтлетпӗр.

**– Хӑвӑр ачӑрсенчен хӑшӗ те пулин яла юлнӑ-и?**

– Шел, виҫҫӗшӗ те хулара пурӑнаҫҫӗ. Ирина – тухтӑра, Олеся юриста вӗренчӗҫ. Ял хуҫалӑхӗнче вӗсене ӗҫ тупса параймӑн. Сергей инженер-механик дипломне илчӗ. Хуҫалӑхшӑн кирлӗ професси темелле. Ҫапах ӗҫе вырнаҫтарма тӑхтаса тӑтӑм. Мӗншӗн тесен, мӑшӑрӑм, Алевтина Константиновна та кунтах, бухгалтерта вӑй хурать. Пӗчӗк хуҫалӑхра виҫсӗмӗр те ертсе пыракан звенора ӗҫлени килӗшӳсӗр. Халӑх ҫаврӗ хапха мар, уҫса хупаймӑн. «Бромбинсем колхоза ярса илчӗҫ», – тесе каласран та асӑрхантӑм. Вӑхӑт ҫитсен тен, унрах пулӑшу ыйтма тивӗ-и?

**– Ют ҫӗр-шывран ҫимӗҫ турттарма чарни ял хуҫалӑх таварне туса илекенсемшӗн сисӗнчӗ-и? Ертӳҫӗн сӗтелӗ чухӑнланмарӗ-и?**

– Пӗр енчен ҫакӑ ял хуҫалӑх таварӗ туса илекенсене ҫул уҫса памалла пек. Анчах нимӗнле улшӑну та сисместӗп. Чӗр тавара ҫаплипех йӳнӗпе туянаҫҫӗ. Лавккасенче апат-ҫимӗҫ хакланса пыни сисӗнет. Усламҫӑсене пуймалли тапхӑр ҫитрӗ тесен те йӑнӑшмӑп. Ялта пурӑннӑ май хушма хуҫалӑхра туса илнӗ апат-ҫимӗҫпе тӑранса пурӑнатпӑр. Кӑҫал улми-ҫырли, пахча ҫимӗҫӗ ҫителӗклех пулчӗҫ. Лавккаран туянмасӑрах сӗтел апат-ҫимӗҫпе пуян. Тен, ҫуркунне, саппас пӗтсе ҫитсен, лавккана чупма пуҫласан санкци витӗмне лайӑхрах туйса илӗпӗр-и? Тата пӗр ҫӗр-шывран илсе килме чараҫҫӗ те ҫавнах урӑх ҫӗртен турттараҫҫӗ. Ҫавӑнпа апат-ҫимӗҫ енчен татӑлмӑпӑр. Чӑн та, хакӗ ҫыртма пултарӗ.

**Лариса НИКИТИНА.**
**Сӑн ӳкерчӗкӗ авторӑн.**

# Куравран – ылтăн медальпе







Иртнĕ эрнере йăлана кĕнĕ йĕркепе Мускаври Пĕтĕм Раççейри курав центрĕнче Раççейри агропромышленноç комплексĕн «Ылтăн кĕркунне» куравĕ иртнĕ. Унта Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă. Ăна ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов ертсе пынă.

Республикăри предприяти-организацисен экспозицийĕ 45 тăваткăл метр йышăннă. Курав стенчĕ çине ял хуçалăх продукцине туса илекен, тирпейлекен предприятисен, фермер (хресчен) тата хушма хуçалăхсен пахча çимĕçне, сĕт юр-варне тата ыттине вырнаçтарнă. «Етĕрне сĕчĕ», «Вăрнарти аш-какай комбиначĕ», «Акконд», «Агрохолдинг «Юрма», «Чăваш бройлерĕ», «Муркашри чăх-чĕп фабрики» пĕрлешӳсен паха çимĕçне Мускавра пурăнакансем, хăнасем хапăлласа туяннă.

Куравра пресс-конференцисем, «çавра сĕтелсем», семинарсем иртнĕ. Ĕçлĕ тĕл пулусене Чăваш Ен делегацийĕ те хутшăннă, агропромышленноç отраслĕнчи çитĕнӳсемпе, çĕнĕлĕхпе хаваспах паллашнă.

«Çĕрпӳ беконĕ», «Вурнарец» (Çĕрпӳ районĕ), Мăн Явăш, Ыхра Çырми (Патăрьел районĕ) ял тăрăхĕсем, И. Федоров (Вăрнар), В. Малов (Канаш) фермерсем тата ыттисем тĕрлĕ конкурса хутшăнма кăмăл тунă. Конкурсăн малтанхи кăтартăвĕсем паллă ĕнтĕ. ЧР ял хуçалăх министерстви фермер ĕçне пуçăнакансене пулăшассипе тухăçлă ĕçлесе пынăшăн ылтăн медале тивĕçнĕ. Ыттисен ĕçне те комисси пысăка хурса хакласса шанса тăраççĕ. Ара çулсерен пирĕн ĕçченсем куравран пысăк наградăсемпе таврăнакан. Хальхинче те ылтăн-кĕмĕл медальсемсĕрех юлмĕç.

# Çĕр ĕçчен çынна кăмăллать

Чăваш Енре пушă çĕр участокĕсене инвентаризацилемелли иккĕмĕш тапхăр пуçланать.

Чăваш Республикин çĕр фончĕн пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 1834,5 пин гектарпа танлашать. Çак шутран ял хуçалăхĕнче усă курма палăртни – 55 процент, вăрман фончĕн лаптăкĕ – 32 процент, çын пурăнакан çĕр – 8 процент, ятарлă сыхлăх территорийĕ – 2 процент, промышленноç çĕрĕ – 1 процент, шыв фончĕ – 2 процента яхăн, саппас çĕр 1 процентран та сахалрах.

Чăваш Республикин çĕр фончĕн тытăмĕнчи çĕр пайĕ федерацин харпăрлăхне кĕрекенни 690,3 пин гектар (çак шутра вăрман фончĕ те). Çакă Чăваш Енри çĕр фончĕн 38 процентĕпе танлашать. Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхĕнче 21,6 пин гектар (1 процент), муниципалитет харпăрлăхĕнче – 97,8 пин гектар (5 процент), патшалăх харпăрлăхне уйăрман çĕрсем 421,3 пин гектар (23 процент). Граждансемпе предприяти-организацисен харпăрлăхĕнче вара – 603,5 пин гектар (республика çĕр фончĕн 33 процентĕ) çĕр.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2014 çулта Патшалăх Канашне янă Çырура çапла палăртнă: «Усă курман çĕр ресурсĕсене çаврăнăша кĕртни бюджета пуянлатма тата социаллă ыйтăва татса пама пулăшать». Михаил Васильевич çитес икĕ çулта пушă çĕр лаптăкĕсене инвентаризаци тума тата вĕсене йĕркене кĕртме тĕллев лартнă. Ĕç тухăçлăхне ӳстерме «халăх инвентаризацийĕ» йĕркелеме палăртнă.

ЧР Пурлăх министерстви республикăри муниципалитетсен территорийĕсенчи пушă çĕрсене инвентаризацилемелли методика сĕнĕвĕсем туса хатĕрленĕ. Тĕп тĕллевсем: хула-ял чиккинче çĕрпе усă курни çинчен калакан тĕрĕс кăтарту илни, пушă тата тухăççăр усă куракан участоксене пусă çаврăнăшне кĕртни, налук хуракан пурлăха анлăлатни тата бюджета налук тӳлемелле мар укça-тенкĕ хушăнни.

Пĕрремĕш тапхăрта районпа хула тăрăхĕсенчи администрацисем йĕркеленĕ ушкăн ĕçченĕсем пушă выртакан çĕрсене вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Пĕтĕмĕшле 21577 участока пăхнă. Вĕсенчен 1713-шĕ (пĕтĕмĕшле лаптăк 566,6 гектар) пушă, усă курмасăр выртать. 859 участок уйрăм çын харпăрлăхĕнче (тупса палăртнă пĕтĕмĕшле çĕрĕн 51,2 процентĕ) пулни паллă. Муниципалитет харпăрлăхĕнчи тата патшалăх харпăрлăхне уйăрман лаптăк – 619 (пĕтĕмĕшле çĕрĕн 36,9 процентĕ), харпăрлăха палăртманни – 197 (11,7 процент).

Муниципалитет администрацийĕсем усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртес тĕлĕшпе тĕрлĕ мероприяти йĕркелеççĕ. Паянхи кун 53 участока (15 гектар) пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Çак шутра:

– 20 участока (11 гектар) арендăна панă;

– 13 участока (1,5 гектар) сутнă;

– 1 участока (0,3 гектар) сроксăр усă курма панă;

– 19 участокпа (2,2 гектар) нумай ачаллă çемьесене тивĕçтернĕ.

29 çĕр лаптăкне (36,6 гектар) Пĕрлĕхлĕх информаци ресурсне кĕртнĕ.

Кăçалхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕнчен инвентаризацин иккĕмĕш тапхăрĕ пуçланнă.

Пушă çĕрсене тата тĕллевлĕ усă курманнисене тупса палăртнă чух право çирĕплетекен тата право ĕнентерекен документсем (харпăрлăхра, арендăра, ĕмĕрлĕхех еткере тытаканни çинчен калаканнисем) пулсан çапла йышăнаççĕ:

– муниципалитет территорийĕнче усă курман çĕрсен хуçисене тупса палăртаççĕ;

– йĕркене пăсни çинчен тивĕçлĕ органсене пĕлтереççĕ;

– çĕр участокĕсене туртса илмелли, çав шутрах суд йĕркипе, документсем хатĕрлеççĕ.

Право çук пулсан çапла йышăнаççĕ:

– çĕр участокĕсене патшалăх кадастр учетне тăратаççĕ. Пушă çĕрсен инвентаризаци кăтартăвĕпе инвестици проекчĕсене вырнаçтармашкăн е çурт-йĕр строительстви валли усă кураççĕ;

– Пĕрлĕхлĕ информаци ресурсне пушă участоксем çинчен хыпар кĕртеççĕ.

Ĕçе 2015 çулхи раштав уйăхĕн 1-мĕшĕччен вĕçлеме палăртнă.

Хальхи вăхăтра Пĕрлĕхлĕ информаци ресурсĕ 196 çĕр участокĕ (пĕтĕмĕшле лаптăк 550 гектар) çинчен хыпар упранине палăртатпăр: эконом класлă çурт-йĕр тума – 82 участок (219 гектар), инвестици проекчĕ валли – 114 участок (331 гектар). Вĕсенчен 52 участока (61 гектар) ĕçе кĕртеççĕ, çав шутрах 27-шне (32 гектар) – çурт-йĕр строительстви валли, 25-ĕшне (36 гектар) – инвестици проекчĕ валли.

# Мĕскершĕн, мĕншĕн ял пĕтет?

Пушă çурт кашни ялтах пур. Вĕсен шăпи пурин те пĕрешкел: кил хуçисем вилнĕ, ачи-пăчи çĕр-шыв тăрăх саланнă. Ватă çын пек малалла ӳпĕннĕскерсем кичеммĕн лараççĕ. Хăй вăхăтĕнче çак çуртсенче те пурнăç вĕренĕ-çке: ача-пăча çитĕннĕ, мăрьерен тĕтĕм тухнă, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх пулнă. Паян вара вĕсенче никам та пурăнмасть. Çын çӳременрен сукмак та çеремпе витĕннĕ, пахча юпи чалăшнă, хапха ишĕлнĕ. Ашшĕ-амăшĕн кил-çуртне хупса хуланаллах талпăнма тивет çамрăкăн. Халĕ ялта пурăнма условисем пурах тейĕпĕр: газ çунать, такăр çул яла çитет. Анчах ĕç çукки пĕтерет. Чылай тăрăхра хуçалăх саланнă. «Çамрăксен хăйсен ĕçне пуçармалла», – тейĕ хăшĕ-пĕри. Анчах пĕр-пĕр ĕç пуçарма укçа кирлине пурте ăнланатпăр. Вăл çук пулсан ĕç малалла каймасть, путланать. Шухăшпа шур пӳрт лартаймăн.

Шкул та, клуб та çук пулсан çамрăка епле тытса тăрăн ялта. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Кивĕ Атикасси ял тăрăхне сакăр ял кĕрет. Маларах кашни ялта тенĕ пекех клуб пулнă. Халĕ вара – пĕртен пĕрре. Кивĕ Атикассинче вырнаçнă вăл, ыттисене хупнă. Сăмахран, Анат Çĕрпӳкассинче пуçламăш классенче вĕренмелли шкула хупнă хыççăн кунта клуб йĕркеленĕ. Халĕ ăна та хупнă. Асăннă ял Етĕрне районĕпе чикĕленнĕ май çамрăксем ытларах унта çӳреççĕ. Хĕрсемпе каччăсем çукпа пĕрех кунта. Вырăнти «Свобода» хуçалăхра ĕçлекен Саша (хушаматне кăтартма хушмарĕ) тракторист каланă тăрăх 3-4 çамрăк çеç. «Кичем мар-и ялта?» – ыйтатăп кăсăкланса. «Çав тери кичем. Клуб çук», – терĕ вăл. «Юрать-ха, ĕç пур», – малаллах калаçтаратăп ăна. «Тепĕр чух вăл та йăлăхтарать», – пулчĕ хурав.

Паллах, çамрăка ватă çынпа танлаштараймăн. Юн вĕренĕ чухне юрлас-ташлас, тус-юлташпа курнăçас килет. Ĕçрен ывăнса таврăнсан та урам енне туртăнать вăл. Карчăк-кĕрчĕк пек выртса çывăрмасть. Паллах, темиçе çамрăкшăн клуб тытса тăни те усси çук. Çав вăхăтрах вăтам е аслă ăру пирки те шухăшламалла. Вĕсем те çынах. Тепĕр чухне уяв е концерт-спектакль йĕркеленĕ май аслисем яшсемпе хĕрсенчен ытларах пухăнаççĕ. Шкул, клуб, фельдшерпа акушер пункчĕ хупăнсан ял пĕтесси куç кĕрет. Малтан çуртсем хупăнĕç, каярахпа ял çĕр çинчен ерипен çухалĕ.

Асăннă районти Тури Çĕрпӳкассинче те çак темăнах хускатрăм. Вăл Хусанушкăнь ял тăрăхне кĕрет. Кунта та икĕ-виçĕ çул каялла клуба хупнă. 350 çын пурăнакан ялта халĕ культура çурчĕ çук. Ытти тăрăхри пекех яшсемпе хĕрсем хуланалла туртăнаççĕ. Урçасем вара хĕрĕхе яхăнах иккен. Хĕрсем çукпа пĕрех. Халăх вăхăта мĕнле иртте-рет-ши? «Ял çынни ĕçкĕ ăшне путрĕ», – терĕ пĕлĕшĕм. Сăра-эрех ырă патне илсе çитерменни, ăна пула çамрăксем ĕмĕрлĕхех куç хупни çинчен каларĕ. Пĕри, авă, урамрах вилсе выртнă иккен.

Вырăнта хуçалăх пур-ха. Анчах шалу тӳлейменрен унта ĕçлесшĕнех мар ял-йыш. Пурнăçа сыпăнтарас тĕллевпе аслă ăру вăй хурать. Укçа памасан та утă-улăм, тырă тивĕçет. Выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп валли апат кирлех. Паллах, ял çыннине те ăнланмалла. Паян укçасăр утăм утаймăн. Çавăнпах ĕнтĕ Мускав çулне такăрлатакан чылайланчĕ. Шел те, тепри унтан ĕçлесе килнĕ укçана та кирлĕ çĕре ямасть. Карланкине чӳхес тĕлĕшпе лавккаран тухма пĕлмест. Ĕç укçине ĕçсе пĕтерсен тепĕр хутчен çула тухать. Сăра-эрех туянма укçа кирлишĕн Мускава çитиччен каймалла-ши?

Шăпа ытларах хамăртан килет тетпĕр. Никама та ирĕксĕрлесе ĕçтерейместĕн. Çапах та çамрăксем тĕрĕс çул çинчен пăрăннишĕн самана та айăплă. Сăра-эрех çеç мар, фанфурик та, тройной одеколон та тиркемеççĕ вĕсем.

«Кунта пурăнмаççĕ, юнашар çуртра каллех никам та çук, виççĕмĕшĕ те пушă, тăваттăмĕшĕсен ачи-пăчи хулара пурăнать. Килсе çеç каяççĕ», – терĕ пĕлĕшĕм ял урамĕпе паллаштарса. Йĕркипе ларакан тăватă çуртра никам та пурăнмасть. Хăраса каймалла! Хирĕç лараканнисен йышĕнче те пушшисем пур. Апла пулсан ялăн малашлăхĕ палăрмасть.

Алса-чăлха çыхнă май йĕп çинчи пĕр куçа асăрхамасăр хăварсан япала сӳтĕлет. Пурнăçра та çавах: пĕри хупăнать, тепри саланать ... ял та пĕтет. Ахальтен мар вăхăтĕнче кашни ялтах клуб, шкул пулнă.

Сăмахăма Геннадий Айхин сăвă йĕркисемпе вĕçлесшĕн:

Мĕскершĕн, мĕншĕн эсĕ сас-хурасăр?<br>
Эп килтĕм, пӳртĕм, эпĕ сан умра!<br>
Ларан кăвак куçусене уçмасăр<br>
Е вĕсене шур илчĕ-и вара?<br>
Тăхта-ха: эсĕ куççульленнĕ мар-и?<br>
Ай, пӳртĕм, пӳртĕм, юрамасть каплах.<br>
Кам кӳрентерчĕ, кам сума сумарĕ,<br>
Иртен-çӳрен-и пăхрĕ урлăрах?..

**Валентина ПЕТРОВА.**



# Чăваш Сурăмĕ

Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăм ял тăрăхне 16 ял кĕрет, 1700 яхăн çын пурăнать. Ял тăрăхĕ район центрĕнчен 12 çухрăмра вырнаçнă. 1882 çулта Чăваш Сурăмра 87 çын пурăннă; 1897 çулта – 70 арçын, 60 хĕрарăм; 1906 – 35 кил хуçалăхĕ, 102 арçын, 87 хĕрарăм; 1939 – 246 çын, 1959 – 157 çын: 66 арçын, 91 хĕрарăм; 1979 – 134 çын; 1992 çулта – 50 кил хуçалăхĕ, 235 çын; 2005 çулта – 73 кил хуçалăхĕ, 235 çын. Чăваш Сурăмра библиотека, пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ паракан шкул, краеведени музейĕ, культура çурчĕ, çăлавçă салтака халалласа лартнă палăк пур.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**«Новый путь» хуçалăх бухгалтерĕ Любовь Кузьмина, Галина Ефимова пенсионерка**



**Венера Александрова, почта пуçлăхĕ**



**Петр Ефимов, тивĕçлĕ канăва тухнă вĕрентекен**



**Мария Романова, ял тăрăхĕн специалисчĕ**



**Виталий Александров**



**Инга Игнатьева, ял тăрăхĕн специалисчĕ**

ХИСЕП

## Ырă ĕç икĕ ĕмĕр пурăнать

Арçыннăн хăйĕн ĕмĕрĕнче вичĕ ĕç пурнăçламалла: çурт хăпартмалла, йывăç лартмалла тата ача ӳстермелле. Патăрьел районĕнчи Туçара пурăнакан Георгий Сугутский вĕсене пурне те тунă. Ĕмĕр тăршшĕпе строительте вăй хунăран вăл хăпартнă объектсем пур çĕрте те пур. Эрозие хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра лартнă йывăççем паян та Пăла хĕррине каш! кашлаççĕ. Пур ачи те пĕрле пуçтарăнсан кĕреке кĕрлесе çеç тăрать. Чăннипех те савăнмалăх та, мухтанмалăх та пур Георгий Николаевичăн. Унăн ырă ячĕ çичĕ сыпăк таранах упранĕ.

Вăл пĕчĕкренех ĕç çумне çыпçăннă. Салтак атти тăхăниччен «Гвардеец» колхозра сысна вити тунă çĕрте ĕçленĕ. 1954 çулта ăна çĕр-шыва сыхлама кайма ят тухнă. Георгий Николаевича шăпа Свердлов облаçне илсе çитернĕ. Кунта вăл Пышма хулинче хими комбинатне тунă çĕре хутшăннă. Çакăнта кирпĕч хума, çурт тăрри витме тата ытти ĕçе пурнăçлама вĕреннĕ.

Каярах Сĕнтĕрвăррине мастертехнолог профессине алла илнĕ хыççăн каччă тăван тăрăха таврăннă.

– Колхозра стройка çине стройка пыратчĕ. 1961 çулта вырăнти больницăна хута ятăмăр. Ун хыççăнах пекарньăпа апат-çимĕç лавккине туса пĕтертĕмĕр. Çавăн пекех ытти объекта тума та хутшăннă. Каярах эрозие хирĕç кĕрешме пуçларăмăр. Çак ĕçшĕн эпĕ ВДНХа медальне тивĕçрĕм.

Хамăн пурнăçра эпĕ вичĕ çурт лартрăм, тивĕçе пурнăçларăмах , – тет ĕç ветеранĕ. Сăмах май, Георгий Николаевич хăш объекта миçемĕш çулта тунине, унта кам ĕçленине, ялти хыпара, кулленхи çанталăка çырса пырать.

Чунĕпе çамрăкскер паян та ахаль лармасть. Кил-тĕрĕшри ĕçсене пурнăçлать, вĕлле хурчĕ усрать. 1980 çултанпа вăл хурт-хăмăрпа кăсăкланать. Вĕсене сăнама юратать. Пушă вăхăта мăнукĕсемпе ирттерет, вĕсене час-часах хăйĕн пурнăçĕ çинчен каласа кăтартать. Ветеран Туçари вăтам шкулта та кĕтнĕ хăна шутланать. Ăна ялан ах вĕренекенсемпе тĕл пулăва чĕнеççĕ.

Георгий тетен мăшăрĕ те, Ульха аппа, стройкăрах вăй хунă. Вăл та маттур, ĕçчен хĕрарăм. Хисеплĕ мăшăр пилĕк ача çуратса ӳстернĕ. Пурне те тивĕçлĕ воспитани парса пурнăçăн аслă çулĕ çине кăларнă. Ĕç ветеранĕсене кĕçĕн ывăлĕпе кинĕ пăхаççĕ. Тепĕр ывăлĕ, Гена та, юнашарах тĕпленнĕ. Пĕр тăвансем ашшĕ-амăшне пилĕпе килĕштерсе, пур-çука çурмалла пайласа пурăнаççĕ.

**Ольга ПАВЛОВА.**

КĔСКЕН

### Клуб çумĕнче – музей

Вăрнар районĕнчи Чăрăшкас Хирлепри культура аталанăвĕпе вулавăш центрĕнче чăваш йăли-йĕркипе паллаштаракан музей уçăлнă. Унта ĕç хатĕрĕсем, савăт-сапа, кĕпе-тумтир упранаççĕ. Асăннă центр пуçлăхĕ Ольга Ефремова çĕнĕлĕхшĕн питĕ савăннă. Вăл наци культурине, йăли-йĕркине, юрри-ташшине асра тытмаллине палăртнă.

### Кулибинсем ăмăртнă

«XXI ĕмĕрти Кулибин» конкурса пĕтĕмлетнĕ. Ăна Шупашкарти Трактор историйĕн музейĕн никĕсĕ çинче йĕркеленĕ.

Кăçал конкурса 20 çын хутшăннă. Çак йышра аслисем те, çамрăксем те пулнă. Сăмахран, Шупашкарти механикăпа технологи техникумĕнче вĕренекенсем тата «Кулибин мастерскойĕ» кружока çӳрекенсем.

Элĕкри ăстасем те конкурсран юлман. Сурăмпуç Мучикасси ялĕнчи Валерий Терентьев «Трактор техники» номинацире çĕнтернĕ. Ку уншăн пĕрремĕш чыслав мар. 2010 çулта вăл виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ (10 пин тенкĕ), 2012 çулта вара гран-прие (30 пин тенкĕ) тивĕçнĕ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

**Раççейре, тĕнчере...**

# Сысна ĕрчететĕн – пуятăн

## КИТАЙ ФЕРМЕРĔСЕН ШУХĂШĔПЕ – РАÇÇЕЙ ПĔТĔМ ТĔНЧЕНЕ ТĂРАНТАРМА ПУЛТАРАТЬ

**Китай халăхĕ çав тери йышлă пулнине пăхмасăрах хăйне хăй тăрантарать. Раççей вара апат-çимĕçе ютран турттарать.**

Китайра Чэнду хули çывăхĕнчи Сычуань ялĕнче пурăнакан 44 çулти фермер 10 çул ĕнтĕ сысна ĕрчет. Кĕтĕвĕнче вăтамран 400 сысна. Юлашки вăхăтра ĕçĕ ăнса пынипе савăнать вăл. *«Пирĕн экономика лайăхланать, пуян çынсем нумай, пурте сысна ашĕ çиеççĕ. Чăн та, фермăра ĕç алли çитмест... Кăмăл тăвакансене хулана кайма ирĕк панă хыççăн хресченсем пинĕ-пинĕпе ĕç шырама тухса кайрĕç. Пекинпа Шанхайра нумай укçа ĕçлесе илме пулать. Хама пулăшма Вьетнамран куçса килнисене чĕнес пулĕ тетĕп».* **Ферма лартмалли çĕре Ван Чоу патшалăхран 50 çуллăха арендăна питĕ йÿнĕ хакпа илнĕ, çăмăллăх кредитне вара (çулталăкне 5 процент хушса тÿлемелле) ял хуçалăхне пулăшакан банк панă.** «Тĕрлĕ шайри чиновниксене укçа час-часах тĕксе пама тивет-и?» – çапла шахвăртса ыйтнине фермер ăнланмасть те. *«Мĕнле укçа? Çапла, ман пата пушар хуралĕнчен те, санинспекторсем те килеççĕ, анчах вĕсем эпĕ саккуна пăхăннине кăна тĕрĕслеççĕ. Китайра пĕчĕк бизнес хисепре, ăна пăвса хума никам та алли çĕклеменмест».* Çавăнпах ĕнтĕ Раççей территорийĕнчен 2,5 хут пĕчĕкрех, 1 млрд та 350 млн çын пурăнакан Китай Халăх Республики сысна ашĕпе хăйне хăй тăрантарать. Ăна юта сутма та мехел çитерет. Чăх какайĕ те, улма-çырлапа пахча çимĕçĕ те çителĕклĕ. Мĕншĕн-ха Раççей çапла пултараймасть?

*– Эпĕ Инçет Хĕвел тухăçĕнче темиçе хут та пулнă,* – каласа парать Сычуанри сысна комплексĕпе пахча çимĕç теплицине тытса тăракан Хо Ву бизнесмен. *– Сирĕн патра кашкăр пек çивĕч тата хурçă пек çирĕп нервлă çын çеç фермер пулма пултарать. Патшалăх пит пулăшмасть, кредитсем çав тери хаклă, банксенчен чылайăшĕ салука пурăнмалли çурта хума ыйтать... Китай çыннисенчен нихăшĕ те кунашкал условисемпе ĕçлеме килĕшес çук. 1989 çулта тухнă Китай саккунĕпе çураçуллăн фермерăн 300 пуç таран сысна пулсан вăл уншăн налук тÿлемест, банк кредит панă чух салук ыйтмасть. Эпĕ комплекса аталантарма патшалăх бюджетĕнчен укçа, вылăх апачĕ туянма çăмăллăх илетĕп. Раççей чиновникĕсем вара Раççей çыннисем ютран кÿрсе килнĕ çимĕçе çиччĕр тесе тăрăшаççĕ пулмалла. Çав вăхăтрах сирĕн çĕр-шывăн кĕтÿ çÿретмелли вырăн та, тырпул туса илмелли уй-хир те анлăшĕпех. Сирĕн вырăнта Китай пулнă пулсан вăл мĕн пур тĕнчене тăрантарнă пулĕччĕ.*



### «Эрех ĕçме вăхăт çук»

Чăн та, ăнăçу çăмăллăн килмест – **Китай фермерĕсем иртен пуçласа каçчен ĕçлеççĕ. Ирхи 4 сехетре тăрса каçхи 6 сехетчен тăрăшаççĕ: çапла кун хыççăн кун.** Выльăхпа аппаланасси, теплицăри пахча çимĕçе пăхса тăрасси, чей çулçи пухасси – чылай чухне пĕтĕмпех алă вĕççĕн. Çав вăхăтрах мĕн пур яла асфальт çул сарнă, çакă хатĕр продукцие пысăк мегаполиссене илсе тухма май парать. Китай ялĕсенче эрех ĕçменпе пĕрех. Уявсенче сăра ĕçеççĕ, сайра-хутра – рис эрехне. Курмасла ĕçсе лартнă çынна кунта асăрхаймăн. *«Тавар туса илекенсен хушшинче конкуренци пысăк,–* ăнлантарать фермерсенчен пĕри. *– Эрехпе айкашсан сан вырăна самантрах ыттисем ярса илеççĕ».* Çирĕм çул каялла кăна Китайра пан улмипе виноград «экзотика» шутланнă. Халĕ Азире, тĕпрен илсен, Китай пан улмийĕ кăна, кунти виноград вара Европăри куравсенче наградăсене тивĕçет.

*– 60-мĕш çулсенче Китай уесĕсем пĕрин хыççăн тепри выçăпа антăхнă,–* аса илет Хэй Фань агроном. *– Шăрăх та типĕ çу килсенех хресчен паян-ыран ура тăсас вĕçне çитнĕ. Халĕ Китай темĕн те туса илсе вĕçене ытти çĕр-шывсене сутать. Çапах та апат-çимĕç нумай туса илнин тÿнтер енĕ те пур. Шоугуан хули çывăхĕнче, пин-пин теплицăра çулталăк тăршшĕпех пахча çимĕç ÿстерекен вырăнта, çĕр питĕ чухăнланса çитнĕ. Çавна май химикатсемпе вăйлă усă кураççĕ, çĕр айĕнчи шывсем вараланаççĕ. Хăярпа помидор хăвăрт ÿсчĕр тесе нитратсемпе вичине пĕлмесĕр усă кураççĕ. Енчен те Раççей Китай опычĕпе усă курас тет пулсан, кунашкал майсемпе аппаланмалла мар. Чăн та, тÿрех темĕн чухлĕ улма-çырлапа пахча çимĕçĕ туса илме пулать, анчах çакăн хыççăн çĕр пулăхĕ пачах та юлмасть.*

### «Фермерсем пуринчен те пуянрах»

Çут çанталăка май пур таран сыхласа хăварассишĕн Китай правительстви экологи телейĕнчен таса çимĕç ÿстерекен фермерсене ытларах пулăшма тăрăшать. Унсăр пуçне кунти инспекторсем час-часах Бразилие каяççĕ, сыснана мĕнле майпа лайăхрах та, хăвăртрах çитĕнтермелли меслетпе паллашаççĕ. Ютран аш-какай турттарма чарни пире аптратса ÿкерчĕ, Китай вара тахçанах Кăнтăр Америкăпа контракт тунă: сысна ашĕ тĕлĕшпе йывăрлăхсем пулсан, хак тăруках ÿссе каясран, бразилисен вĕсене çийĕнчех ашпа тивĕçтермелле. **Китай влаçĕ чуххăмăн нимĕн те тумасть: малтанах шухăшласа пăхма, асăрханма хăнăхнă.** Пирĕн ăнлавра хресчен хырăнман, сăмакун кĕленчипе сулкалашакан, вĕçĕмсĕр парăма кĕрекен телейсĕр арçын пулсан, Китайра пачах урăхла. Кунти фермерсем хăвăрт пуйса пыракан çынсем: тутлă та паха апат кашнине кирлĕ-çке, çитменнине – кунсерен. Тавар туса илекен ялсем майĕпен мегаполиса куçаççĕ. Тĕслĕхрен, чаплă чей туса илекен Тяньсин Яньчацунь ялĕ – тахçан кунта хресченсем уйăхне 100 доллар илессишĕн плантацисенче ĕçленĕ, халĕ хăйсем валли «Фермерсен хулинче» – çывăхри районти çичĕ хутлă чаплă çуртсенче – хваттерсем туянаççĕ. Пирĕн фермерсем вара мĕнпе мухтанпа пултараççĕ?

Раççейре тавар туса илекенсене патшалăх çителĕклĕ пулăшнă, тĕрлĕ субсидипе йÿнĕ кредитпа тивĕçтернĕ пулсан Европăран улма-çырла, пахча çимĕç, сĕт, ашкакай турттарăттăмăр-и? Пирĕн çĕр-шывра Китайрипе танлаштарсан 10 хут сахалрах çын пурăнать. Анчах китайсем темшĕн хăйсене хăйсем тăрантараççĕ, эпир вара çĕр нумайăшне пăхмасăрах – пултараймастпăр. Халĕ ютран апат-çимĕç турттарма чарнă, анчах пирĕн хирсем харăсах тĕш тырăпа хумханма тытăнмĕç, выльăх кĕтĕвĕпе тулмĕç. Ял хуçалăхне тĕпрен çĕнетсе улăштармалли вăхăт çитрĕ. Китай опычĕ пирĕншĕн паха тĕслĕх. Анăçпа мирлешĕпĕр-и е çук-и – пĕлтерĕшлех те мар. Кирек мĕнле пулсан та хамăрăнне çинине нимĕн те çитмĕ.

# Горбачевсем хуйхăрнă, анчах...

**Евгений Титаренко – ача-пăча писателĕ. Раиса Горбачева шăллĕ. Чылайăшĕ унăн кĕнекисене вуласа ÿснĕ. Халĕ те вулатчĕç пулĕ те, юлашки повеçне вăл 30 çул каяллах çырнă-çке...**



*Автор паян та пурăнать, анчах ун пирки яланах иртнĕ вăхăтра калаçаççĕ. Çĕр-шыва Михаил Горбачев ертсе пыма пуçласан Евгений Титаренкошăн кил вырăнĕ Воронеж облаçĕнчи Орловка поселокĕнчи психбольница пулса тăнă.*

Евгений Титаренко ячĕ унăн йыснăшĕпе тăван аппăшĕн ятĕнчен те маларах паларнă. Хăйĕн чи паллă кĕнекине вăл студент çулĕсенчех çырнă.

Тем те пĕр курса çÿреме ĕмĕтленнĕскер шкул пĕтернĕ хыççăн Ленинградри çарпа тинĕс училищине вĕренме кĕнĕ. Кайран ун пурнăçĕнче Поляр унки леш енĕ, Çурçĕр флочĕ пулнă. Донбасра тимĕрçĕре ĕçленĕ вăл, унтан Горький ячĕллĕ Литература институтне çул тытнă. Кунта вăл шахтăри авари çинчен «Обвал» ятлă роман çырать. Анчах ăна пичетлемеççĕ, тепĕр романне те, арçынпа хĕрарăм çинчен çырнине, çав шăпах лекет. Çавăн хыççăн Евгений çитĕннисем валли урăх нимĕн те çырман, шурă хута ачасемшĕн çеç хуратнă. Çамрăк ăру унăн повеçĕсене юратса вуланă.

1964 çулта Евгений Титаренко хăйĕн мăшăрĕпе, Зоя Габоева поэтпа, Воронежа куçнă. Анчах çемье пурнăçĕ ăнман. Çакăн сăлтавне эрехпе çыхăнтармаллатăр. Хальхи вăхăтра писателĕн малтанхи арăмĕпе пĕртен пĕр хĕрĕ Мускавра пурăнаççĕ.

Юлташĕсем аса илнĕ тăрăх – Титаренко йыснăшĕпе, ун чухне КПСС Ставрополь крайкомĕн пĕрремĕш секретарĕпе, ытла мухтанман, анчах юлташĕсене ун хÿттипе курорта лекме пулăшнă. Горбачев Мускава куçсан вара писатель КПСС тĕпкомĕн секретарĕн арăмĕн шăллĕ пулнине Воронежра пурте тенĕ пекех пĕлсе çитнĕ.

Тăванĕсем пысăк çын пулни Титаренко пурнăçне пачах урăх май çавăрса хунă. Писатель çыхăнусем пуррипе усă курса хăйне валли мĕн те пулин тăвассишĕн çунман. Пачах урăхла. Пĕррехинче ăна Германири кинематографсем шыранă, унăн пĕр кĕнеки тăрăх фильм ÿкерес тĕллевпе. Анчах Евгений килĕшмен: «Эпĕ кирлĕ мар вĕсене, Горбачев интереслентерет. Унран вара мана нимĕнле чап та кирлĕ мар».

Орловкăна ăна ĕçке ернинчен сыватма 1985 çултан илсе кайма тытăннă. Психбольницăра тытиччен лайăх санаторие вырнаçтарса сиплесси пирки сăмах та пулман. Куç тĕлне ан лектĕр тенĕ, ахăртнех. Раиса Максимовна хăйĕн шăллĕ çинчен Воронеж обкомĕн пĕрремĕш секретарĕнчен Вадим Игнатовран телефонпа ыйтса пĕлнипех çырлахнă.

Евгений Максимовича чăннипех сиплеммĕ-ши унта? Çулсерен унăн сывлăхĕ хавшаса çеç пынă. 1989 çулта вăл пурăнма тĕппипех больницăна куçнă. Хут çинчи диагноз – пуç мими сиенленни, Альцгеймер чирĕ. Малтанлăха писателе лайăх пăхнă. Уйрăм палата уйăрса панă. Литература анинче пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем те пырса тăнă, анчах пурăна киле больница ертÿçисем çынсене килме чарнă. Раиса Максимовна ун патне пĕрре те килсе кайман. Анчах хăйĕн аса илĕвĕнче çакăн пек йĕркесем хăварнă: «Шăллăм– пултаруллă, талантлă çын. Анчах унăн пултарулăхĕ никама та кирлĕ пулманнипе путланчĕ. Шăллăм ĕçет, çавăнпа уйăхĕ-уйăхĕпе больницăра выртать. Унăн шăпи – аттепе аннен хуйхи. Ку манăн ырату, 30 çул ĕнтĕ эпĕ çак ыратупа çÿретĕп. Уншăн питĕ хуйхăратăп, ача чухне эпир питĕ çывăх пулнă, пĕр-пĕрне питĕ юратнă...».

Чĕрĕлле пытарнă пекех янăраççĕ çак сăмахсем, анчах ку йĕрксем 1991 çулта пичетленнĕ. Писательсен союзĕнчи юлташĕсен сăмахĕсем тăрăх – ун чухне Титаренко пирки никам та пĕтнĕ çын тесе шухăшламан.

Горбачев хăй те çын çинче пĕрре мар арăмĕн шăллĕ çинчен хĕрхенсе калаçанçи тунă. Анчах мĕншĕн-ха вăл тăванне сиплемме чаплă клиникăна яман? Пултарнă вĕт-ха. Çапах та нимĕн те туман.

*Çитес çул Евгений Титаренко 80 çул тултарать. Больницăра иртнерĕ çулсем ахаль иртмен. Унччены пултаруллă та сумлă çынран нимĕн те юлман – ыттисемпе пĕр палатăра выртакан чĕмсĕр те телейсĕр старик кăна. Паян кун та никама та кĕртмеççĕ ун патне: хăй вăхăтĕнче арăмĕ пулнине те, хĕрне те, пĕрле ĕçленисене те...*

**Раççей хаçат-журналĕ тăрăх Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Ял хĕрарăмĕ**

# Ырă çурта чĕкеç те иленет

Патăрьел районĕнчи Туçари Мордвиновсем – ялти хисеплĕ çемьесенчен пĕри. Вениамин Григорьевичпа Валентина Николаевна пирки ырă сăмах каламалли нумай. Вĕсем сăпайлă, ĕçчен, кăмăллă... Ачисене те хăйсем пек пулма вĕрентнĕ. Ĕçченлĕх вĕсен йăхран-йăха куçнă.

Вениамин Мордвиновăн ашшĕпе амăшĕ – Григорий Петровичпа Федосия Петровна – тăхăр ача çуратнă. Анчах чир-чĕре пула хăшĕпĕри пĕчĕклех вилнĕ. Виçĕ ывăлĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, иккĕшĕ – Александрпа Никандр – унтан таврăнайман. Мефодий вара Яппун вăрçинче те пулнă. Вăл тăван тăрăха чĕрĕ-сывă çаврăнса çитнĕ.

Колхоз юхăмĕ пуçлансан Мордвиновсем пĕрлĕхлĕ хуçалăха кĕнĕ. Ачисене те ĕç çумне ирех çыпăçтарнă. Веня яланах ашшĕпе юнашар пулнă. Вăл пушăтран пăяв явнă, çăпата хуçнă, пушмак туса тĕлĕнтернĕ. 10-11 çулта вăкăрпа, лашапа уй-хир сӳрелеме кайнă, кĕлте, утă-улăм турттарнă.

1958 çулта Вениамин Григорьевича салтака кайма ят тухнă. Вăл Украинăри Коваль хулинче çар чаçĕнче хĕсметре тăнă. Пултаруллă салтака çулталăкран урăх полкран пынă Коваленко капитан хăй патне илсе кайнă. Туçа каччи çапла майпа уйрăм пая лекнĕ. Кунта та вăл палăрма ĕлкĕрнĕ, юлташĕсемшĕн тĕслĕх пулса тăнă.

Çартан таврăнсан каччă Канашри механизаторсен шкулне вĕренме кĕнĕ. Права илсенех тăван ялне таврăннă, колхозра Т-40 тракторпа ĕçлеме тытăннă. Каярах, шоферсен курсне пĕтернĕ хыççăн, автомашина рулĕ умне ларнă. Çулсем иртнĕçемĕн техника паркĕнче аппаратчикра, аккумуляторщикра вăй хунă.

Мордвиновсене вĕлле хурчĕпе танлаштарма май пур. Тул çутăличчен ĕçлеме тытăнаççĕ те каç пулмасăр та пушанаймаççĕ вĕсем. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усранăран канма та вăхăт çук. Унсăр пуçне хурт-хăмăрпа та кăсăкланаççĕ. Вĕлле шучĕ чылай. Пушă вăхăтра Вениамин Григорьевич йывăçран тĕрлĕ япала ăсталать. Вăл Туçари чиркӳ валли мĕн кăна туса паман?! Турăша илемлетнĕ эрешсем тӳрех куçа тыткăнлаççĕ. Унăн ĕçĕсене Патăрьелĕнчи кĕлĕ çуртĕнче те курма пулать. Чăннипех те унăн алли ылтăн.

«Çӳпçине кура хупăлчи», – теççĕ халăхра. Унăн мăшăрĕ те питĕ маттур. Вăл чылай вăхăт фермăра ĕçленĕ. Хисеплĕ мăшăр 51 çул пĕр-пĕринпе шăкăлтатса пурăнать. Вĕсем виçĕ ача çуратса ӳстернĕ, пурне те тивĕçлĕ воспитани панă. Аслă ывăлĕ Саша Шупашкарти ял хуçалăх академине пĕтернĕ. Вăл Сĕнтĕрвăрринче тĕпленнĕ. Хĕрĕ Надя çемйипе Мускавра пурăнать. Кĕçĕнни Олег ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе тĕп килпе юнашар кермен пек çурт лартнă. Вăл çак ял хĕрнех качча илнĕ. Мордвиновсем мăнукран та пуян. Çак мăшăр пурăнакан пӳрт айккине кашни çуркуннех чĕкеçсем йăва çавăраççĕ. Пĕчĕк кайăк усал этем патĕнче хӳтлĕх шырамасть теççĕ. Вăл та кăмăллă çын ăçта пурăннине пĕлет, ăш пиллĕскер патне туртăнать.

**Александр ФРОЛОВ.**

# Сĕтеклĕ апат вăй-хал кӳрет



Зоя Федорова Вăрнар районĕнчи «Санар» агрофирмăра чылай çул бригадирта вăй хунă. Тивĕçлĕ канăва та кунтанах тухнă. Пултаруллă, ĕçчен хĕрарăм «ЧР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ.

Пенсие тухнă пулсан та килте алă усса ларма пултараймасть вăл. Çурхи-кĕрхи ĕçсем вăхăтĕнче хуçалăх столовăйĕнче вăй хурать. Ольга Андреева поварпа пĕрле çĕр ĕçченĕсем валли апат пĕçереççĕ. Вĕсен техĕмлĕ апат-çимĕçне пурте юратса çиеççĕ. Хырăм тутă пулсан кăмăл-туйăм та çĕкленет, ĕç ӳсĕмĕ те палăрать. Тутлă апатшăн ĕçченсем поварсене яланах тав тăваççĕ.

Зоя Илларионовна мăшăрĕпе сакăр ача çуратса ӳстернĕ. Шел, упăшки вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн килçуртне хăй йĕркелесе пурăнать. Юрать, икĕ ачи – Илюшпа София – хăйпе юнашар. Ыттисем тăван йăваран вĕçсе тухса саланнă, хăйсем çемьеллĕ. Çапах ашшĕ-амăшĕн килне килсех çӳреççĕ, пулăшаççĕ.

**Лариса НИКИТИНА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# «Ывăлăм, ан хăвар кунта!»

Ĕмĕрĕпех фермăра дояркăра ĕçлерĕ Тарье аппа. Упăшки çамрăклах пурнăçран уйрăлса кайнине пула икĕ ывăлне пĕчченех çитĕнтерчĕ вăл. Вĕсене те пĕчĕкренех ĕçе хăнăхтарчĕ. Ĕçчен, маттур ӳсрĕç пăхаттирсем. Амăшне çурт хăпартма та пулăшрĕç. Тенкĕ çумне тенкĕ хушса кирпĕч çурт çĕклерĕ хĕрарăм. Паллах, çăмăл пулмарĕ ăна. Мăшăрĕ çукран вăл е ку ыйтăва ачисемпе татса пачĕ. Вĕсем çумра пулни савăнтарчĕ ăна. Пĕччен мар-çке, юратнă тĕпренчĕкĕсем юнашар.

Çулсем иртнĕçемĕн ачисем пĕрин хыççăн тепри тăван «йăваран» вĕçсе тухса кайрĕç. Амăшĕ яла таврăнма ыйтсан та киле килмерĕç, иккĕшĕ те хуларах вырнаçрĕç. «Мĕн ĕçлетпĕр-ха ялта, – терĕç вĕсем. – Сана пăхнишĕн патшалăх пире укçа памасть-çке. Халĕ вăй-хал пур чухне пĕччен те пурăнатăн. Пысăк ĕçсене тума пулăшатпăр, килсех çӳретпĕр. Малашне вара – курăпăр». Çавнашкал лăплантарчĕç ывăлĕсем амăшне кашни килмессерен. Лешĕ ачисен лару-тăрăвне ăнланса: «Çапла, колхоз та пĕтрĕ. Ĕç те çук», – текелерĕ. Хăйĕн чунĕ вара вăркарĕ, пăшăрханчĕ. Кил-çурчĕ малашне пушă ларасран шикленчĕ.

Тĕрĕсех канăçсăрланнă ватă çын чĕри. Фермăра чылай çул ĕçлени ватлăхра аса илтерме пуçларĕ. Ара, ураран резина атă хывман-çке вăл вăхăтра. Çавна май ура сыппиисем самаях ыратрĕç кинемейĕн. Çапах та кил-тĕрĕшри ĕçсене пурнăçлама пăрахмарĕ вăл. Ачисем хуларан килессе кĕтсен тумалли ĕç вăраха тăсăласса ăнкарчĕ. Ĕçлемесĕр пурăнма хăнăхманскер çĕр улмине те пĕчченех кăларчĕ. Ял-йыш пахчара тăрăшнă вăхăтра епле-ха пӳртре выртăн? Чун чăтмасть.

Кăларнă çĕр улмине пĕчченех суйларĕ. Миххе икшер витре ярса ăна тĕп сакайне йăтрĕ. Ӳсĕм палăрмасть пулсан та кăмăлпах вăй хучĕ кинемей. Ахальтен мар халăхра: «Йышпа – ĕçлеме, пĕччен хур тукмакĕ çиме аван», – теççĕ.

Çĕр улмине кăларса пĕтерсен тепĕр куннех аптрарĕ Тарье аппа, вырăнпах выртрĕ. Ури çине пачах пусаймарĕ вăл. Çавна май апат çиме те тăраймарĕ. Юрать, кӳршĕаршă каçса пăхкаларĕ ăна. Чунĕ тухиччен ачисене курса юлас тĕллевпе шăнкăравлама шут тытрĕ. Аслă ывăлĕ Элексей урăх хулана командировкăна кайнă иккен. Кинĕпе сăмахларĕ ватă. Вырăсла калаçма çăмăл мар ăна. Çавăнпа мĕн калассине калаймарĕ, чунне лăплантараймарĕ. «Мĕнле пурăнатăр? Ачасем еплерех?», – тенипех çырлахрĕ. Кинĕ, хулара çитĕннĕскер, чăвашла пĕлмест. Тарье аппа вара вырăсла чухлаймасть. Çавăнпа яланах ывăлĕпе калаçаканччĕ. Ку хутĕнче унпа сăмахласси пулмарĕ.

Тепĕр ывăлне Микулая шăнкăравларĕ. Вĕсем – çемйипех хăнара. Çапах мĕн калассине пĕлтерчĕ ăна амăшĕ. Лешĕ ыранах çитме шантарчĕ.

Микулай килне çитсен кун пирки арăмĕпе канашларĕ. Амăшне хĕл каçма хăйсем патне хулана илсе килме шухăшларĕ. Лешĕ вара яхăнне те ямарĕ. «Икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте хамăра та тăвăр. Епле пурăнăпăр? Илсе килетĕн пулсан эпĕ ачасемпе хваттер тара тытса пурăнăп, – терĕ çиллессĕн. – Кӳршĕ ялта Ваттисен çурчĕ пур. Кайса яр çавăнта. Унта сывлăхне тĕрĕслесе тăма медсестра та пур». Микулай арăмне хирĕçлеме пăхрĕ. Анчах хĕрарăм хăйĕн шухăшĕнчен иртмерĕ, упăшкине çав-çавах Ваттисен çурчĕ пирки ăнлантарчĕ. Юлашкинчен арçын çак шухăшпа лăпланчĕ.

Маларах шантарнă пек ывăлĕ амăшĕ патне тепĕр кунах çитеймерĕ. Ăна Ваттисен çуртне вырнаçтарас тĕлĕшпе унта-кунта çӳрерĕ. Ĕçе пурнăçласан тăван ялне вĕçтерсе çитрĕ.

Хулана хăй патне илсе каятăп тесе йăпатрĕ амăшне, пуçтарăнма хушрĕ. Хальччен ниçта тухса курманскерĕн чунĕ кил-çурчĕшĕн пăшăрханчĕ. Кинемей йĕри-тавра пăхса çаврăнчĕ. Кашни япали, сĕтел-пуканĕ çывăх уншăн. Кил карти алăкне çăрапа питĕрнĕ май куçĕнчен куççуль шăпăртатрĕ. «Çуркуннеччен чипер тăр, килĕм-çуртăм», – пăшăлтатрĕ Тарье аппа. Микулай сисиччен куççульне шăлчĕ, чунне хытарчĕ.

Ывăлĕ хăйне Ваттисен çуртне хăварасса тĕлĕкре те тĕлленмен вăл. Çăмăл машина çак çурт умне чарăнсанах нимĕн те ăнланмарĕ. Тĕпренчĕкне çине-çинех ыйту пачĕ. Лешĕ чĕнменнине кура чĕри ырă мара сисрĕ. Шалалла иртнĕ май хăй пек ватă çынсене курсан вара ăнланчĕ. «Ывăлăм, ан хăвар мана кунта, – тархасларĕ вăл. – Тăван ялах кайса яр. Килтех чун тухтăрччĕ».

Амăшĕн сасси арçын хăлхинчен кайма пĕлмерĕ. Çав вăхăтрах арăмĕн сăмахĕсене те аса илчĕ вăл. Пӳлĕм варринче пĕр вăхăт ним чĕнмесĕр тăнă хыççăн алăк еннелле утрĕ. Амăшĕпе сыв пуллашмасăрах урамалла вирхĕнчĕ...

**Страницăна Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, юпа уйăхĕн 20-мĕшĕ**
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, юпа уйăхĕн 21-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇӲПÇЕРЕН» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВОВОЕ ПОЛЕ» (12+)
20.30 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, юпа уйăхĕн 22-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ÇАВРА СĔТЕЛ» (12+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерни кун, юпа уйăхĕн 23-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Эрне кун, юпа уйăхĕн 24-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «БУХТЫ-БАРАХТЫ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (12+)
21.15 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăмат кун, юпа уйăхĕн 25-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «СЛЕД В ИСТОРИИ» (6+)
10.00 «СИРЕ ТĔЛЛЕНМЕН ТЕ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
17.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
18.00 «АВАН-И» (12+)
19.00 «АМА КАЙĂК ÇУЛĔПЕ». ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔ (6+)
20.00 «ÇАПЛА ПУЛТĂР!» (12+)

**Вырсарни кун, юпа уйăхĕн 26-мĕшĕ**
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
10.00 «МАН УПĂШКА ПУЛСАМĂР». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «ЭХ, ЮРРĂМ, ЯНĂРА» (12+)
18.00 «ДУХОВНАЯ ЖИЗНЬ» (12+)
18.30 «ЯШ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ» (12+)
19.00 «Г. ЛЕБЕДЕВ ÇУРАЛНĂРАНПА 100 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ «ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХ ЮРĂПА ТАШĂ АНСАМБЛĔ» (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Юпа, 15 – юн кун | Юпа, 16 – кĕçнерни кун | Юпа, 17 – эрне кун | Юпа, 18 – шăмат кун | Юпа, 19 – вырсарни кун | Юпа, 20 – тунти кун | Юпа, 21 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 7.22 | 7.24 | 7.26 | 7.28 | 7.30 | 7.32 | 7.34 |
| | анать | 17.51 | 17.48 | 17.46 | 17.43 | 17.41 | 17.38 | 17.36 |
| Кун тăршшĕ | | 10.29 | 10.24 | 10.20 | 10.15 | 10.11 | 10.06 | 10.02 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун | 26-мĕш кун | 27-мĕш кун |
| | | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче | Хĕр паллинче |

## КĂМĂЛ ТУРАМ – ПĔР ТУРАМ

# Çемье ăшши пурне те çитет

**«Нумай та пĕтет, сахал та çитет – çемье пĕрлĕхне мĕн çитет?» – çакăн пек девизпа хутшăннă Йĕпреç районĕнчи Эйпеç ялĕнче пурăнакан Музыкантовсем «Çулталăк çемйи – 2014» конкурса. «Çĕнтерессе шухăшлама та пултарайман эпир. Мĕншĕн тесен пурте тĕплĕн хатĕрленнĕ», – терĕ кил хуçи хĕрарăмĕ Елена Николаевна.**

**Асăннă конкурса кашни çулах йĕркелеççĕ. Малтан вăл вырăнта иртет, кайран – районта, виççĕмĕш тапхăрĕ вара – Шупашкарта. Халĕ Музыкантовсем республика шайĕнчи ăмăртăва хутшăнма хатĕрленеççĕ.**

### Стася юратăвĕ

Çак çемье пирки ялта ыррине çеç илтме тӳр килчĕ мана. Олег Николаевичпа Елена Николаевна тăватă ача çуратса ӳстернĕ. Виççĕшĕ тăван килтен вĕçсе тухса кайнă. Кĕçĕнни Андрей вырăнти шкулта 4-мĕш класра вĕренет. Унсăр пуçне Музыкантовсем ачасене çемьене йышăнакан ашшĕ-амăшĕ шутланаççĕ. Кунта Алена, Вовăпа Стася телей тупнă.

Алена вĕсем патĕнче çиччĕмĕш çул пурăнать. Халĕ 7-мĕш класра вĕренет. Шкулта та аванах ĕлкĕрсе пырать. Кил хуçисене «хресне анне», «хресне атте» тесе хисеплет. «Чиркӳре шыва кĕртрĕмĕр. Хресне амăшĕ хам пултăм», – терĕ кун пирки Елена Николаевна.

Вовăпа Стася вара – пĕр тăвансем. Хăй вăхăтĕнче вĕсене те ашшĕ-амăшĕнчен уйăрнă. Пиччĕшĕ Музыкантовсем патĕнче 2011 çултанпа пурăнать. Йăмăкне каярах илсе килнĕ. «Ун чухне Стася 4 çулта çеçчĕ. «Анне патне каяс килет ман», – тесе йĕретчĕ. «Атя эпĕ санăн аннӳ пулатăп», – терĕм ăна пĕррехинче. «Атя», – килĕшрĕ вăл. Çав кунран мана «анне» тесе чĕнме тытăнчĕ», – аса илет иртнине хĕрарăм. Вова вара «Лена аппа», «Олег пичче» тет. Халĕ вăл Андрейпа пĕр класра вĕренет, хĕр пĕрчи ялти ача садне çӳрет.

Капмар çуртра пурте туслă пурăнаççĕ. Пурин валли те вырăн çителĕклĕ. Пĕрпĕрне урок тума пулăшаççĕ. Пĕчĕк Стасьăна вара пурте юратаççĕ.

«Ют ачасене илсе килсен килтисем хирĕç пулмарĕç-и?» – кăсăкланатăп эпĕ. «Çук. Пĕр-пĕрне тӳрех хăнăхрĕç вĕсем. Ывăлăм Женя Стасьăна пĕрре курсах килĕштерчĕ. Пĕчĕккскер хăй те ун патне туртăнать. Женя Мускавра вĕренет. Унсăр тунсăхлать вăл. Стася Аленăпа та питĕ туслă, унпах çывăрать», – кăмăллăн калаçрĕ хĕрарăм.

Музыкантовсен аслă ывăлĕ Саша Çĕрпӳри аграри техникумĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ ял хуçалăх академийĕнче кусăмсăр майпа пĕлĕвне аталантарать. Хĕрĕ Светлана Шупашкарти кулинари техникумĕнче ăс пухать. Кĕçĕннисем аслисене куç пек кĕтеççĕ. Каникулта е уявсенче пĕрле пухăнсан вара кермен кĕрлесе çеç тăрать.



Çемье туслăхĕ сцена çинче те палăрнă. Елена Николаевна «Пилеш кайăкĕсем» юрра шăрантарнă чухне ачисем ун тавра ташланă. «Юрри тунсăхлă пулнăран ачасем çине пăхмарăм, куççуль тухасран асăрхантăм. Стася вара мана кусран пăхса ташланă иккен. Çакна жюри асăрханă. Пĕчĕкскерĕн юратăвĕнчен тĕлĕннĕ вĕсем. Тен, çавăншăнах пĕрремĕш вырăн пачĕç пире», – терĕ вăл.

### Вĕсемшĕн алăк уçă

Елена та, Олег та пысăк çемьере ӳснĕ. Çавăнпа та яланах нумай ача-пăча çитĕнтересси пирки ĕмĕтленнĕ хĕрарăм. Мăшăрне ют ачасене хутлĕхе илесси çинчен калаçсан, лешĕ хирĕçлемен.

Вăл калана тăрăх – ачасен ашшĕ-амăшĕсем килсех çӳреççĕ. Аленăн ашшĕ хăйĕн йăнăшне ăнланнă. Халĕ вăл Мускава ĕçлеме çӳрет. Çавна май хĕрне кăçал шкула кайма япаласем туянса панă. Стасьăпа Вовăн ашшĕ-амăшĕ те çулталăкне виçĕ хутчен килсе каяççĕ, парнесем илсе килеççĕ. Унсăр пуçне вĕсемпе скайппа калаçаççĕ. Ачасене ашшĕ-амăшне юратма, хисеплеме вĕрентеççĕ Музыкантовсем. «Мĕншĕн вĕсене ашшĕ-амăшĕ хăйсем патне илсе кайманни пирки ыйтрĕ Вова пĕррехинче манран, – чунне уçрĕ хĕрарăм. – Эпĕ ăна вĕсен пурнăçри йăнăшĕ пирки ăнлантартăм. Хальлĕхе пирĕн патра пурăнатăр терĕм. Ашшĕ-амăшне хирĕç пĕр сăмах та каламан эпĕ. Мĕншĕн тесен ачашăн вĕсем – яланах çывăх çынсем. Çакă чунра-юнра çирĕпленнĕ. Ашшĕ-амăшĕ иртнишĕн кулянать халĕ. Пире яланах тав тăваççĕ вĕсем».

Стасьăна ашшĕ-амăшĕ илсе кайма шухăшлать иккен. «Мĕнле пурăнăпăр эпир унсăр? Пурте ăна хăнăхнă. Çитменнине пиччĕшĕнчен уйăрас килмест», – пăшăрханать Елена Николаевна.

Ачасене çемьене йышăннăшăн патшалăх паракан укçана шутлакан ялта тупăнатех. Хăй вăхăтĕнче Музыкантовсене те темĕн те пĕр каланă. Ара, «халăх çăварĕ – хапха çăвар» тесе ахальтен каламан. Вĕсен çемйи ялта тĕслĕх вырăнĕнче пулнине кура «хапха» уçăлса хупăнма пăрахнă.

«Ачасене тивĕçлĕ воспитани пама тăрăшатпăр. Çитĕнсен те пире манса ан кайччăр. Килтен тухса кайсан пирĕн пата килĕç-и е çук-и – вĕсен ирĕкĕ. Килсен – савăнатпăр, килмесен – кулянатпăр. Алăк вĕсемшĕн яланах уçă. Алена, Стасьăпа Вова пирĕншĕн хамăр ачасем пекех хаклă», – вĕçлерĕ шухăшне кил хуçи хĕрарăмĕ.

### Çемье пĕрлĕхне мĕн çитет?

Олег Николаевичпа Елена Николаевна 19 çул килĕштерсе пурăнаççĕ. Хăйсен пĕрлехи кун-çулне пĕчĕк пӳртрен пуçланă мăшăр. Ку керменте вара сакăр çул кун кунлаççĕ. Укçа ĕçлесе илес тĕллевпе кил хуçи ялти ытти арçын пекех Мускав çулне такăрлатать. Елена вара кил-тĕрĕшре ĕçлет. Маларах вăл 18 çул шкулта повартa вăй хунă. Хĕрарăм валли килте те ĕç туллиех: сăвакан ĕне çеç виççĕ. Унсăр пуçне хур-кăвакал, чăх-чĕп, сысна, сурăх. Урăхла каласан, пĕчĕк ферма. Вĕсене хĕл каçарма чылай апат хатĕрлемелле-çке. Çавăнпах хирте икĕ гектар çĕр илнĕ Музыкантовсем. Унта нумай çул ӳсекен курăк çитĕнтереççĕ. «Кăçал çанталăк савăнтарчĕ. Курăка тăватă хутчен çулса илтĕмĕр. Пахча çимĕç те лайăх çитĕнчĕ», – пĕлтерчĕ вăл.

Ку тăрăхра та ял çынни вылăх-чĕрлĕхпе усă курма тăрăшать. Чылайăшĕ кăçал уйхирте çĕр илнине палăртрĕ хĕрарăм. Çапла, вылăх кăмпа пек ӳсмест. Унран тупăш илес тесен нумай тар тăкмалла. Пурнăçа сыпăнтарма сĕт укçи те самай пулăшу кӳрет. Ăна кунта ял халăхĕнчен 13 тенкĕпе туянаççĕ. Елена Николаевна патшалăха кунсерен 20 литр сĕт парать. Çу кунĕсенче вара – 40-50 литр. «Çитĕнекен организма сĕт те, аш та çителĕклĕ кирлĕ. Çавăнпа чылай вылăх тытатпăр. Тепĕр чухне хур какайне те тутанса пăхас килет. Сурăх ашне те юратса çиеççĕ ачасем. Апат-çимĕçе лавккаран туянас пулсан çука юлатпăр», – терĕ хĕрарăм.

Паллах, кил-тĕрĕшри ĕçсене ачисемпе пĕрле пурнăçлаççĕ вĕсем. Лешсем мĕн вăй çитнĕ таран пулăшаççĕ. Аслă тĕпренчĕкĕсене те Музыкантовсем пĕчĕкрен ĕç пурнăç тыткăчи пулнине вĕрентнĕ. Халĕ çак йĕркене кĕçĕннисем хăнăхаççĕ. Пушă вăхăтра вара çемйипех кăмпа-çырлана çӳреме юратаççĕ. Хĕлле пурте йĕлтĕр сыраççĕ, çулла велосипедпа ярăнаççĕ. Олег Николаевичпа пĕрле уйра футболла выляма кăмăллаççĕ. Вăл килте час-час пулманран унсăр тунсăхлаççĕ, ăна пурте кĕтеççĕ. Çакă мар-и вăл çемье ăшши, çемье телейĕ? Ĕçре те, спортра та, канура та пĕрле пулни кил-йыша çирĕплетет, пĕр чăмăра пĕтĕçтерет. Çапла, çемье пĕрлĕхĕнчен ырри нимĕн те çук.

**Валентина ПЕТРОВА. Йĕпреç районĕ.**


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**6. Навоз, торф, чернозем, бой** кирпича, песок, гравмассу с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.


### Хĕрарăма хӳтĕленĕ

Пĕр хĕрарăма 1993 çулта Элĕкри Парк урамĕнчи çуртра район администрацийĕн йышăнăвĕпе ордерпах хваттер панă. 2008 çулхи çурла уйăхĕнче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен йышăнăвĕпе асăннă çурта пăснă. Анчах та хĕрарăма нимĕн те тивĕçмен. Çавна май вăл пулăшу ыйтса районти прокуратурăна çул тытнă.

Район сучĕ прокурорăн тавăç хушăвне пĕтĕмĕшле пурнăçланă. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен хĕрарăма хăтлă хваттерпе тивĕçтермеллине палăртнă. Суд йышăнăвĕ вăя кĕмен.

### Ентешĕсене те хĕрхенмен

Шупашкарти Ленин район сучĕ 31 çулти Махбуба Кулмурадова айăплине туллин çирĕплетнĕ. Вăл Узбекистан гражданĕсене улталанă.

Ултавçă хĕр ытти çынпа миграци службин ĕçченĕ пек тăхăнса (ун çумĕнчех ветеран удостоверенийĕ те пулнă) узбексем пурăнакан хваттере пырса кĕнĕ, вĕсен документĕсене пуçтарса илнĕ. Паспортсене 10 пин тенкĕ тӳлемесĕр каялла тавăрса пама килĕшмен. Суд хĕре 6 уйăхлăха ирĕкрен хăтарнă, колоние яма йышăннă. Хĕр хăй те Узбекистан Республикинчен пулнă. Укçа тесе ентешĕсене çаратма шут тытнă вăл.

### ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 15.10 | 16.10 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | +1 | –1 |
| | 14–16 сехетре | +6 | +1 |
| Çумăр çăвать | | ☂ | ☂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 749 | 747 |


«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор сумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 [1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3927
Тираж 4578

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.